28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ОКТЯБРĔ 12 ЭРНЕКУН 198 (6949) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Аслă Октябрь уявĕ умĕн

Октябрьти Социализмлă Аслă революци пулнăранпа 28 çул тултариччен вăхăт пĕр уйăхран та сахалтарах юлчĕ. Хамăрăн аслă уява çулсерен ĕçпе кĕрешӳре çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илесси пирĕн çĕршыври ĕççыннисен пархатарлă йăли пулса тăчĕ ĕнтĕ.

Кăçалхи уява совет халăхĕ уйрăмах хавасланса кĕтсе илет. Иртсе пыракан 1945-мĕш çулта Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем, хамăр союзниксен çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, этемлĕхĕн чи усал тăшманĕсене—фашистла Германипе империалистла Японие çапса аркатрĕç. Хĕрлĕ Çар çав аслă кĕрешӳре тĕп вырăн йышăнса тăчĕ. Ирсĕр тăшмансене çапса аркатса, вăл тĕнче цивилизацине, пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинчи этемлĕхе фашистла аркатуçăсен тискерлĕхĕпе чуралăхĕнчен çăлса хăварчĕ. Пирĕн Тăван çĕршывăн тĕнче умĕнчи мухтавĕпе чапĕ татах та çӳлерех çĕкленчĕ.

Кăçал эпир майăн 9-мĕшĕнче — фашистла Германие çĕнтернĕ ятпа, сентябрĕн 3-мĕшĕнче—Япони агрессорне çĕнтернĕ ятпа, икĕ хутчен, пĕтĕм халăх уявĕсене—Çĕнтерӳ праçникĕсене чысласа ирттертĕмĕр. Пирĕн çĕршыв мирлĕ аталану тапхăрне кĕчĕ. Совет халăхĕ татах лăпкă саманари пултаруллă ĕçе тытăнчĕ. Кашни совет çынни паян пĕр ĕмĕтпе—хамăрăн Тăван çĕршыва тата хăватлăрах, тата пуянрах та культураллăрах çĕршыв туса хурас ĕмĕтпе çунса тăрать.

Магнитогорскпа Кузнецк комбиначĕсенчи металлургсем кăçалхи çулталăк варринче Çĕнтерӳ ячĕпе социализмлă ăмăрту пуçарса ячĕç. Çав хăватлă ăмăртăва пирĕн Чăваш республикинчи предприятисем те хутшăнчĕç. Кашни предприяти —пысăкки те, пĕчĕкки те—1945 çулхи производство программине срокчен тултарас, продукци туса кăларассине хăпартас, таварсен хăйне ларакан хакне йӳнетес, предприятие хĕле хатĕрлесе çитерес, рабочисен культурăпа йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă обязательство илчĕ.

Халĕ, аслă Октябрь уявĕ умĕн, кашни предприяти коллективĕн хăй илнĕ обязательствăсене мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе тухас пулать. Ку ĕçе тепĕр пысăк ĕçпе çыхăнтармалла. ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕпе ноябрĕн 1-мĕшĕ хушшинче предприятисем хĕле мĕнле хатĕрленнине общество енчен пăхса тухмалла пулать.

Парти Обкомĕ предприятисене хĕле хатĕрлес ĕç пачах та çителĕксĕр пынине палăртрĕ. Чылай предприятисемпе электростанцисем, сăмахран, Якупин тата Челноков юлташсем главнăй инженер пулса ĕçлекен заводсем, Шупашкарти электростанци тата коммунальнăй предприятисем энергетика оборудованине, производство çурчĕсене, пурăнмалли çуртйĕре юсаса çитермен, производство валли чĕртаварпа топливо запасĕсем хатĕрлесе хуман, пурăнмалли çĕнĕ çуртсем тумалли тата производствăн çĕнĕ хăвачĕсене ĕçе ямалли плана пурнăçа кĕртмен.

Пуçарулăх, чăн-чăн большевикла пуçарулăх кирлĕ. Çав пуçарулăх пур çĕрте ĕç чăннипех ăнăçлă пулса пырать. Улатăрти паровозсем юсакан заводри 1-мĕш номерлĕ токарно-механически цех хĕллехи вăхăтра ĕçлеме пĕтĕмпех хатĕрленсе çитнĕ. Ку цеха СССР Верховный Совечĕн депутачĕ Т. Моисеева юлташ начальник пулса ертсе пырать. Вăл тăрăшса организациленипе цех коллективĕ юсав ĕçĕсене пĕтĕмпех хăйĕн вăйĕпе туса ирттернĕ. Çывăх кунсенчех çав цеха хĕле хатĕрленсе çитнине палăртакан паспорт параççĕ.

Октябрь уявĕ тĕлне пирĕн кашни предприятие, пĕтĕм чугун çул транспортне, кашни паровоза, пурăнмалли çуртсемпе общежитисене хĕле тĕплĕн хатĕрлесе çитерес пулать. Халĕ, мирлĕ вăхăтра, эпир пĕр-пĕр ĕçе тумасăр хăварса, вăрçă сăлтавĕсем çине тӳнтерме пултараймастпăр. Пирĕн рабочисене ăшă та таса вырăнта ĕçлеме, ăшă та культураллă çуртра пурăнма май туса памалла.

Аслă Çĕнтерӳпе хавхаланса, Кубань колхозникĕсем государствăна тырпул срокчен парса татассишĕн, кĕртыррисене вăхăтра лайăх акса хăварассишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту пуçарса ячĕç. Çак ăмăртăва пирĕн Чăваш республикинчи колхозниксем те хутшăнчĕç. Эпир тырпулсене хăвăрт та пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме, ноябрĕн 1-мĕшĕччен государствăна тырă парса татма обязательство илтĕмĕр.

Халĕ акă, октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ноябрĕн 1-мĕшне çитиччен, государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăхлăх пырать. Пирĕн аслă Октябрь уявне кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмпех туса пĕтернипе, государство умĕнчи пур тĕрлĕ парăмсене те парса татнипе кĕтсе илес пулать.

Республикăри нумай колхозсем, халех ĕнтĕ пур ĕçсене те туса пĕтерсе, Октябрь уявне хаваслăн кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Вăрнар районĕнчи колхозсем государствăна октябрĕн 1-мĕшĕччен тырă парса татма сăмах панăччĕ. Вĕсем хăйсен сăмахне çилпе вĕçтермерĕç, ăна чăнчăн большевикла пурнăçа кĕртрĕç. Çавăн пекех Советски районри колхозниксем те чылай ăнăçлă ĕçлеççĕ. Анчах республикăна пĕтĕмĕшпе илсен, государствăна тырă парас, авăн çапса пуçтарас ĕçсем пĕлтерхинчен, вăрçă пынă çулхинчен, нумай вăрахăнрах пулса пыраççĕ. Кувакино, Хĕрлĕ Чутай, Тăвай, Улатăр, Шăмăршă, Çĕмĕрле районĕсем уйрăмах япăх ĕçлеççĕ.

Йывăр вăрçă пынă вăхăтра пирĕн республика государство умĕнчи пур обязательствăсене те чыслăн пурнăçа кĕртсе пычĕ пулсан, халĕ, мирлĕ вăхăтра, япăх ĕçлесе хамăрăн ята яма пирĕн нимĕнле сăлтав та çук. Демобилизаци законĕ тăрăх, çартан вăйпитти çынсем нумай таврăнчĕç, лашасемпе машинăсен хисепĕ те ӳсрĕ, çапла ялхуçалăхĕнче çĕнĕ вăйсем хутшăнчĕç. Пирĕн лайăх ĕçлеме вăйсем те, майсем те çителĕклĕ. Ĕçе тĕрĕс организациллеме пĕлни, мĕнпур вăя мобилизацилени кăна кирлĕ.

Октябрь уявне хатĕрленнĕ май пирĕн колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх фермисене, обществăллă çуртсене, клубсемпе вулав çурчĕсене, шкулсемпе больницăсене хĕле кĕмс мĕнле хатĕрлесе çитернине те тĕплĕн тĕрĕслесе тухмалла. Туса ĕлкĕреймен ĕçсене халех тăвас пулать.

Вăрçăпа сиен курса юлнă хуçалăха юсаса ура çине тăратас, совет çĕршывĕн çарпа экономика хăватне малалла тĕреклетсе пырас ĕçре укçа-тенкĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Çĕрпӳпе Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи финанс работникĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва пуçарса ячĕç, республикăри мĕнпур финанс работникĕсене çав ăмăртăва хутшăнма чĕнчĕç. Вĕсем укçа-тенкĕ пухмалли плана Октябрь уявĕ тĕлне 60 процент тултарма, Тăваттăмĕш Военнăй Заем укçине пĕтĕмпех пухса çитерме, ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕнпур налогсемпе ытти тĕрлĕ парăмсене пĕтĕмпех тӳлесе татма пулчĕç.

Çĕрпӳ районĕ хăйĕн финанс планне кварталтан кварталах ирттерсе тултарса пырать. III-мĕш квартал планне вăл октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 133,5 процент тултарнă.

Анчах ку ĕç республикăра япăх пырать-ха. Финанс работникĕсен, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, хăйсен ĕçĕнче татăклă улшăну тăвас пулать.

Октябрьти Социализмлă Аслă революци 28 çул тултарнин уявне пирĕн пур çĕрте те—фабрикăсемпе заводсенче, транспортра, промартельсенче, колхозсенче, учрежденисенче—çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илмелле.

БЕЛОРУССИ ССР-ĕн ДЕЛЕГАЦИЙĔ ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ÇАМРĂКСЕН КОНФЕРЕНЦИНЕ ТУХСА КАЙНĂ

МИНСК, октябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 9-мĕшĕнче Белорусси ССР-ĕн делегацийĕ Лондона Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен конференцине тухса кайнă.

Делегацие Белоруссири çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн Центральный Комитечĕн секретарĕ Зимянин юлташ пуçпулса ертсе пырать. Делегацире çаксем тăраççĕ: партизан пулнă Совет Союзĕн Геройĕсем В. Ливенцов, Н. Машеров, В. Парахневич, белоруссен паллă поэчĕ Аркадий Кулешов тата ыттисем те, мĕн пурĕ 10 çын.

Мускава Польша çамрăкĕсен делегацийĕ килнĕ

Октябрĕн 10-мĕшĕнче Мускава Польша çамрăкĕсен делегацийĕ килнĕ. Центральный аэродрома хăнасене совет çамрăкĕсен фашизма хирĕç кĕрешекен комитечĕн, ВЛКСМ Центральный Комитечĕн, поляксен Совет Союзĕнчи патриочĕсен союзĕн представителĕсем тата ыттисем те кĕтсе илнĕ.

Польша çамрăкĕсен делегацийĕн руководителĕ Р. Обрончка пичет представителĕсене çапла каласа кăтартнă:

— Пирĕн делегацире 20 çын. Вĕсене Польшăри çамрăксен демократиллĕ организацийĕсем суйланă. Вĕсене суйланă организацисем пирĕн çĕршывăн обществăпа политика пурнăçĕнче хастарлăн ĕçлеççĕ.

Польша Халăх Совечĕн депутачĕ Мария Кузанская—çамрăксен «ТУР» ятлă организацийĕн генеральнăй секретарĕ. Янина Бальцежакпа Луция Малиновская поручиксем—«ЗВМ» ятлă организаци членĕсем. Нимĕçсен тылĕнче партизансемпе пĕрле паттăррăн çапăçнăшăн вĕсене иккĕшне те «Грюнвальд Хĕресĕ» ятлă орденпа наградăланă. Польша Халăх Совечĕн депутачĕ С. Стемплевский—поляксен Францири çамрăкĕсен союзĕн председателĕ.

Делегаци членĕсем пурте тенĕ пекех нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă йывăр кĕрешӳве хутшăнса ĕçленĕ. Вĕсене яланах совет çамрăкĕсен паттăр ĕçĕсем хавхалантарнă, совет çамрăкĕсем пĕтĕм тĕнчери çамрăксене Тăван çĕршывшăн мĕнле çапăçмаллине хăйсен чаплă ĕçĕсемпе кăтартса пычĕç.

Пирĕн çĕршывра совет çамрăкĕсен пурнăçĕпе питех те интересленеççĕ. Ăна совет çамрăкĕсен делегацийĕ нумаях пулмасть пирĕн патра курса çӳренĕ чухне пур çĕрте те асăрханă ĕнтĕ. Совет çамрăкĕсен делегацине темĕн чухлĕ ыйтусем паратчĕç, Совет Союзĕнчи çамрăк рабочисем, ученăйсем, студентсем мĕнле пурăнни, ĕçлени çинчен ыйтса пĕлетчĕç.

Пирĕн делегаци членĕсем Мускав çамрăкĕсен хăни пулма пултарнăшăн çав тери хĕпĕртеççĕ. Польшăна совет çамрăкĕсем пырса кайнă хыççăн халĕ Совет Союзне пирĕн делегаци килчĕ. Эпир кунта килни Совет Союзĕпе демократиллĕ Польшăри çамрăксен туслă çыхăнăвне тата ытларах çирĕплетсе вăйлатма пулăшĕ. (ТАСС).

Болгарин чрезвычайнăй посланникĕ тата полномочнăй министрĕ Д. Михалчев господин хăйĕн верительнăй грамотисене СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн Заместительне Н. Я. Наталевича пани

Октябрĕн 9-мĕшĕнче Кремльте СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн Заместителĕ Н. Я. Наталевич Болгарин чрезвычайнăй посланникне тата полномочнăй министрне Д. Михалчев господина йышăннă. Михалчев господин хăйĕн верительнăй грамотисене панă.

Йышăнава Д. Михалчев господинпа пĕрле çаксем пынă: Болгари миссийĕн суту-илӳ советникĕсем Б. Христовпа В. Владов господинсем тата миссин виççĕмĕш секретарĕ Д. Пеев господин. Посланник вĕсене Н. Я. Наталевичпа паллаштарнă.

Верительнăй грамотăсем панă чухне çаксем пулнă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ В. Г. Деканозов, СССР Верховный Совет Президиумĕн секретарĕ А. Ф. Горкин, СССР Наркоминделĕн Балканри çĕршывсен отделĕн заведующийĕ А. А. Молочков.

Верительнăй грамотăсем йышăннă хыççăн Н. Я. Наталевич Д. Михалчев господинпа калаçнă. Калаçăва В. Г. Деканозов хутшăннă.

ЗАЕМСЕН ВЫЛЯВĔСЕМ

Октябрĕн 10-мĕшĕнче Мускавра, Союзсĕн çурчĕн Октябрьски залĕнче Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Заемĕн (тăваттăмĕш çул кăларăмĕн) тата ССР Союзĕн Оборонине çирĕплетмелли Заемăн тиражĕсем пулса иртнĕ.

Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Заемăн тиражĕнче пĕтĕмпе 314.420.000 тенкĕлĕх 1.940.000 выигрыш пулнă. Вăл шутра 3.000 тенкĕлĕххисем—200, 1000 тенкĕлĕххисем—1000 выигрыш.

СССР Оборонине çирĕплетмелли Заемăн тиражĕнче пĕтĕмпе 72.588.800 тенкĕлĕх 440.550 выигрыш пулнă. Вăл шутра 3.000 тенкĕлĕххисем—53 выигрыш, 1000 тенкĕлĕххисем—265 выигрыш.

СТАЛИН ЮЛТАШ ОТПУСКА ТУХСА КАЙНИ

Октябрĕн 9-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ канма отпуска тухса кайнă. (ТАСС).

Бэвин господина

Пĕрлешнĕ Королевствăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрне

ЛОНДОН.

Союзлă Великобританин çĕрĕ çинчен тухса кайнă май, эпĕ Сире, министр господин, Британи правительствипе мана тата манăн сотрудниксене ăшшăн йышăннăшăн хамăн саламăма калама ыйтатăп.

Великобританипе Совет Союзĕн халăхĕсен интересĕсемшĕн тата пĕтĕм тĕнчери мире çирĕплетессишĕн малашне те пĕрпĕрнипе килĕштерсе ĕçлессине, хамăрăн çул çинче тĕл пулакан вăхăтлăх йывăрлăхсене çĕнтерессине тата эпир çак аслă тĕллеве ăнăçлăн пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшассине эпĕ шанса тăратăп.

В. МОЛОТОВ.

Бевин господин янă личнăй послани

Молотов господина

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен конференцийĕ хыççăн хăвăр Англирен тухса каяс умĕн юратса послани ярса хăварнăшăн эпĕ питĕ савăнатăп.

Совет Союзĕпе Великобритани халăхĕсен интересĕсемшĕн тата пĕтĕм тĕнчери мире çирĕплетессишĕн пĕр-пĕрнипе малашне те килĕштерсе ĕçлессине шанса каланине эпĕ кăмăллатăп.

Эсир калана пек, çав çул çинче пирĕн йывăрлăхсем пулма пултараççĕ, анчах та эпир тăвакан ĕç çав тери паха пулнă пирки, пирĕн ăна тăвас тесе, мĕнпур вăя хурса ĕçлемелле. Мĕнпур тĕнчери этемлĕх мир тума, экономика тĕлĕшĕнчен çĕнĕрен аталанса пыма тата пурнăç условийĕсене лайăхлатма тăрăшать. Çавсене пурнăçа кĕртесси пирĕн чи малти вырăнта тăракан тĕллев пулмалла.

СОЦИАЛИЗМЛĂ ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂСЕНЕ ПУРНĂÇЛАР, ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАМАЛЛИ ПЛАНА СРОКЧЕН ТУЛТАРАР!

И. М. ЧАРЫКОВ,
ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ

Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем, ялхуçалăхĕнчи работникĕсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса хăйсем çине илнĕ обязательствăсен шутĕнче чи пысăк та тĕп вырăна государствăна ноябрĕн 1-мĕшĕччен тырă парса татма илнĕ обязательство йышăнса тăрать.

Тырпул хатĕрлес ĕç кăçал мирлĕ вăхăтра пулса пырать. Çавăнпа та пирĕн ку ĕçе вăрçă вăхăтĕнчи çулсенчинчен лайăхрах туса ирттермелле. Çакна тума пирĕн пур условисем те пур. Хĕрлĕ Ялавлă Вăрнар районĕн ĕçĕ çакна питĕ лайăх çирĕплетсе парать. Вăрнар районĕнчи колхозниксем тырă вырма тытăнсан малтанхи кунсенченех государствăна тырă парассишĕн çине тăрса ĕçлеме пуçларĕç,—авăн çапнă çĕрте МТС-ăн машинисемпе лайăх усă курчĕç, авăна тăпачăпа çапассине те тĕрĕс организациллерĕç. Çанталăк йĕпе-сапа тăнине пăхмасăрах, çапнă тырра типĕтсе тасатрĕç, ăна хатĕрлев пунктĕсене вăхăтра леçсе пачĕç. Район руководителĕсемпе колхоз руководителĕсем государствăна тырă леçсе парас ĕçе районри мĕнпур транспорта мобилизацилерĕç,—хатĕрлев пунктĕсене тырра вăкăрсемпе, ĕнесемпе, лашасемпе, автомашинăсемпе турттарчĕç. Вăрнар районĕнчи колхозниксем Тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçне, пирĕн çĕршыва гитлерла пусмăрçăсенчен çăлса хăварнă Хĕрлĕ Çар умĕнчи патриотла тивĕçе яланах асра тытса ĕçлерĕç. Çапла ĕçленине пула вара Вăрнар районĕ октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татрĕ.

Анчах та республикăри пур районсем те Вăрнар районĕ пек ĕçлеймеççĕ-ха. Çавăнпа та ĕнтĕ республика государствăна тырă парас тĕлĕшпе юлса пырать.

Республикăна хăш районсем каялла туртса пыраççĕ-ха?

Чи малтанах кунта Вăрнар районĕ пекех лайăх ĕçлеме пултарнă районсене, анчах та вăрнарсем пек лайăх ĕçлемен районсене асăнмалла. Ку тĕлĕшпе Шупашкар районĕ уйрăмах палăрса тăрать. Район октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татма обязательство илчĕ. Анчах та çак обязательство Шупашкар районĕн руководителĕсене питех пăшăрхантарман пулас. Сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне районăн государствăна тырă памалли парăмĕ 1761 тонпа шутланнă. Сентябрĕн 21-мĕшĕнче парти райкомĕн пленумĕ пулса иртнĕ. Пленумра государствăна срокчен тырă парса татас тĕлĕшпе илнĕ обязательствăна мĕнле пурнăçласа пынине сӳтсе-явнă. Анчах та райком секретарĕ Караушев юлташ хăйĕн докладĕнче государствăна тырă парас тĕлĕшпе район мĕншĕн начар ĕçленин сăлтавне каласа паман. Йышăннă решенире те вара района хăйĕн обязательствине тултарас ĕçре хăшпĕр колхоз руководителĕсем саботаж туни кансĕрлесе пыни çинчен тата çав саботажпа кĕрешменни çинчен пĕр сăмах та каламан. Кунта ĕнтĕ ĕçе лайăхлатма мĕн-мĕн тума кирлине кăтартса хăвармалла пулнă. Анчах та пленума çиелтен çеç хатĕрленнĕ пирки çаксене пĕрне те туман. Кунта пленумла выляни çеç пулса тăнă. Пленумра пулнисем: Хочахмат ял Совет председателĕ Герасимов, «Урожай» тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсен председателĕсем Федоровпа Матвеев государствăна тырă леçес ĕçе большевикла организацилес вырăнне, пленум хыççăнхи тепĕр кунне—сентябрĕн 22-мĕшĕнче, хăйсен обязательствисене манса кайса, ĕçкĕ пуçласа янă. Пленум хыççăнхи пилĕккунлăхра Шупашкар районĕ пленум умĕнхи пилĕккунлăхринчен те сахалтарах тырă леçнĕ. Çакăн сăлтавĕ ĕнтĕ район руководителĕсем государствăна тырă парас паха ĕç çине çиелтен çеç пăхни пулса тăрать.

Шупашкар районĕпе пĕр ретех Çĕрпӳ, Шăхасан, Муркаш, Красноармейски районсене лартмалла. Çак районсенче пĕтĕм республика виçипе илсе пăхсан кăна ĕç ăнăçлă пынă пек курăнать. Тĕрĕссипе илсен, вĕсем хăйсен аллинчи мĕнпур майсемпе усă курман, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, кăçал темиçе вунă пин пăт сахалтарах тырă леçсе панă.

Государствăна тырă парас тĕлĕшпе республикăна каялла туртса пыракан районсем—Кувакино, Хĕрлĕ Чутай, Тăвай, Çĕмĕрле, Шăмăршă, Улатăр, Чкаловски, Комсомольски тата Канаш районĕсем пулаççĕ.

Çав районсенче тырă турттарас ĕçе контроллесе тăманнине пула, хăшпĕр колхозсем сентябрь уйăхĕччененех государствăна тырă пама тытăнман е çав ĕçĕн ятне кăна тунă. Çапла, сăмахран, Тăвай районĕнчи «25 лет Октября» колхоз сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тырă хатĕрлемелли плана 3 процент, Молотов ячĕпе тăракан колхоз 11 процент кăна тултарнă. Муркаш районĕнчи «Зерно» колхоз сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне государствăна пĕр пĕрчĕ те тырă паман пулнă. Юлса пыракан районсенчи партипе совет тата хатĕрлев организацийĕсен руководителĕсем хăшпĕр колхоз руководителĕсен «государствăна çанталăк япăх пирки тырă пама çук» текен сиенлĕ шухăшĕсем майлă пулса тăчĕç. Çав вăхăтрах вĕсем авăнсемпе сушилкăсем, витнĕ итемсемпе лупасайĕсем тăвас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнман, тырă типĕтмелли пур майсемпе те усă курман.

Районри организацисене колхозсенче тырпула шалти нуша валли çирĕплетнĕ виçерен ытларах салатса пĕтернине чарса лартма кирли çинчен, çавăн пекех тата тырă парас ĕçе кансĕрлекен çынсене çирĕп наказани пама кирли çинчен вăхăтра асăрхаттарнă пулин те, колхозсенче авансăпа тырă памалли закона пăснă фактсем пур. Çапла, сăмахран, Ишлей районĕнчи «Мотор» колхозра хуçалăх нуши валли 410 килограмм тырă расходласа пĕтернĕ, çав вăхăтрах государствăна пурĕ те 184 килограмм кăна панă. Чкаловски районри «Первомайск» колхоз (председателĕ Зайцев) государствăна пĕлтĕр 694 центнер тырă парса татман пулнă. Çав колхоз 1944 çулта çапса пĕтермен тырра кăçалхи июль уйăхĕнче кăна çапса пĕтернĕ. Çапса илнĕ 12.000 пăт ытла тырра салатса янă, государствăна пĕр пĕрчĕ те паман. Кăçал та çак председатель авăн çапас, çапла вара государствăна тырă парас ĕçе вăраха хăварса пырать: сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне пурĕ те 37 центнер кăна панă, планпа 1.853 центнер памалла. Парти райкомĕ колхоз председательне Зайцева государствăна хирĕçле ĕç тунăшăн ятланипех çырлахса ларнă.

Хăшпĕр районсен руководителĕсем —çанталăк япăх тăни тырă памалли графика тултарма чăрмантарать тесе калаççĕ, анчах тырра колхозра ытларах тытса усрама, государствăна сахалтарах пама тăрăшакан руководительсем çинчен, саботажниксем çинчен сăмах та хушмаççĕ. Çав вăхăтрах хăшпĕр колхоз руководителĕсем государствăна тырă памаççĕ, çапнă тырра колхозра тытса усраççĕ. Государствăна тырă парас ĕçе ертсе пырассине лайăхлатмалла, кашни колхозах тырă парас ĕçе кашни кунах хутшăнмалла тăвас пулать.

Хĕрлĕ Чутайпа Тăвай районĕсенче государствăна тырă парас ĕçе çав тери япăх организациленĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнче Заготзерно пунктне кашни пилĕк кун хушшинче мĕн чухлĕ тырă леçсе пани районра тырпул хатĕрлес ĕçе пачах та ертсе пыманнине питĕ лайăх кăтартса парать. Кунта колхозсене тăтăшах ертсе пымаççĕ, çавăнпа та ĕнтĕ уйрăм колхозсем государствăна тырă парас ĕçе 5—10 кун хушши хутшăнманнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук.

Тăвай районĕнче те тырпул хатĕрлес ĕç çавăн пекех япăх пырать. Кунта тырпул пухса кĕртессине çав тери вăраха хăварнă, тырпула пухса кĕртнĕ чухне нумай тăккаласа пĕтернĕ. Районра капан хывас тата авăн çапас ĕçе кирлĕ пек организацилемен. Çакăн пирки те ĕнтĕ район тырпул хатĕрлес тĕлĕшпе кая юлса пырать. Анчах çав вăхăтрах ялхуçалăх ĕçĕсем тата государствăна тырă парасси вăраха юлса пыни ВКП(б) райком секретарьне Молоствов юлташа питех пăшăрхантармасть. «Красное Сормово» колхоз район центрĕнчен пĕтĕмпе те 1,5 километрта çеç. Çак колхозран 50 çынпа яхăн район центрĕнче ĕçлеççĕ, анчах та район центрĕнчен çак колхоза пулăшу пама пĕр çынна та мобилизацилемен. Пĕрреччен райкомпа райисполком колхоза тырпул пухса кĕртме пулăшас тесе, районри учрежденисенчи работниксене пухса унта воскресник туса ирттерме йышăннă, анчах та воскресник кунне пĕтĕмпе те 0,5 гектар çеç пухса кĕртнĕ. Колхозсене ертсе пырас ĕç çине çакăн пек çиелтен пăхсан, ĕç малалла каяс çук.

Ĕçĕн меслетне улăштармалла, ыйтусене тарăнраххăн сӳтсе-явмалла, партипе комсомол организацийĕсене, колхоз руководителĕсене большевикла мобилизацилемелле, калаçусемпе çеç лăпланса лармалла мар, материальнăй базăсем тумалла, ĕçлеме лайăхрах условисем туса памалла, кая юлса пыракан колхозсем çине ытларах çаврăнса пăхмалла.

Нумай районсем МТС ĕçленĕшĕн натуроплата тӳлемелли плана тултарас тĕлĕшпе чăтма çук юлса пыраççĕ, ку тĕлĕшпе лайăхрах ĕçлекен Вăрнарпа Пăрачкав районĕсенчен пример илмеççĕ. Паллă ĕнтĕ, çакăн пек ĕçленине йĕркеллĕ тесе калама çук. Вăрçăн йывăр вăхăтĕнче те пире государство машинăсем, горючи парса тăчĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕн çавăншăн государствăна тырă парса тӳлемелле.

Государствăна тырă парас тĕлĕшпе уйрăм хуçалăхсем чăтма çук кая юлса пыраççĕ. Улатăр, Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Первомайски. Советски тата ытти хăшпĕр районсенче уйрăм хуçалăхсем государствăна тырă пама халĕ те тытăнман. Пăрачкав районĕнче вара уйрăм хуçалăхсем 103 тонна вырăнне пĕтĕмпе те 3 тонна çеç [illegible] Иртнĕ çулсенчи ĕç опычĕ çакна кăтартса парать: уйрăм хуçалăхсенчен обязательнăй йĕркепе илмелли тырра вăхăтра илмесен, çав хуçалăхсем вара хăйсен государство умĕнчи обязательствисене тултараймасăр парăмлă пулса юлаççĕ.

Государствăна тырă парас тĕлĕшпе совхозсем тата предприятисемпе учрежденисен подсобнăй хуçалăхĕсем калама çук япăх ĕçлеççĕ. Çĕрпӳри селекци станцийĕ тырă парас тĕлĕшпе питĕ начар ĕçлет. Шупашкарти, Çĕмĕрлери, Етĕрнери, Канашри предприятисемпе учрежденисен подсобнăй хуçалăхĕсем государствăна тырă пама тытăнман та. Çак хуçалăхсене ертсе пырас ĕçе çакăн пек япăхтарса янине халех пĕтермелле.

Ялхуçалăхне ертсе пырасси халь—тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлес ĕçе чăрмантаракан пур сăлтавсене те тупса пĕтересси, государство панă заданисене тултарма тата ирттерсе тултарма кирлĕ майсене шыраса тупасси пулать.

Парти райкомĕсем парти организацийĕсен рольне тĕрĕс ăнланса илнĕ çĕрте колхозсем умĕнче тăракан задачăсене пурнăça кĕртес ĕç те ăнăçлă пырать. Малта пыракан районсенче тырпул пухса кĕртме тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем пама хатĕрленнĕ вăхăтра массăллă-политикăллă пысăк ĕç туса ирттернĕ.

Анчах та уйрăм районсенчи парти райкомĕсем массăсем хушшинчи партиллĕ-политикăллă ĕçе çителĕксĕр организациленĕ, партипе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсене начар ертсе пыраççĕ.

Кувакино, Улатăр, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле, Тăвай районĕсем тырпул пухса кĕртес ĕçе тата хăйсен обязательствисене срокчен тултарас ĕçе çав тери вăраха янине çакăнпа çеç ăнлантарса пама пулать. Кунта парти райкомĕсем партипе комсомол организацийĕсене кирлĕ пек тĕрĕслесе пымаççĕ, колхозсене ертсе пырас ĕçре час-часах партипе комсомол организацийĕсене шута та илмеççĕ.

Хĕрлĕ Чутай районĕнче партин пуçламĕш организацийĕсем 48 организаци (вăл шутра 25 ялти организаци) пур. Анчах та парти райкомĕ вĕсен организациллĕ рольне тивĕçлипе усă курма пултарайман, пуçламĕш организацисенчи нумай коммунистсене колхозсем умĕнче тăракан задачăсене татса парас ĕçе мобилизацилемен. Парти райкомĕ пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсемпе çителĕклĕ ĕçлемест.

Тăвай районĕнче 33 колхозра партин пуçламĕш организацийĕсемпе кандидатсен группиĕсем 29 организаци тата комсомол организацийĕсем 28 организаци пур. Апла пулин те, парти райкомĕ колхозсене ертсе пырас ĕçе вĕсене сахал явăçтарнă. Çавăнпа та партипе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсенчен нумайĕшĕ тырă парас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ.

Ялти коммунистсемпе комсомолецсен ялхуçалăх ĕçĕсене туса пĕтерессишĕн тата государствăна тырă парса татассишĕн пыракан социализмлă ăмăртура чи малти ретре пымалла. Коммунистсен авторитета хăйсен званийĕпе е чинĕпе мар, колхоз производствинче тăрăшса ĕçленипе илмелле. Коммунистăн паян чи татăклă участоксенче ĕçлемелле, унăн хăй çине чи йывăр та ответлă ĕçсене илмелле, вăл хăй те, унăн çемьи те ĕçре пример кăтартса пымалла.

Парти, совет тата хатĕрлев организацийĕсем умĕнче халĕ государствăна тырă парас ĕçе хăвăртлатас, хамăр çине илнĕ социализмлă обязательствăсене тултармалла тăвас задача тăрать. Çакна тăвас тесен, халĕ государствăна тырă парас тĕлĕшпе юлса пыракан колхозсем çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Çав колхозсене халех авăн çапма тата тырă леçсе пама пулăшмалла. Çавăн пек колхозсене чи опытлă та пултаруллă организаторсене ямалла. Государствăна тырă парас ĕçре кансĕрлекен çынсене ĕçрен хăтарса хытă ответ тыттармалла.

Халĕ ĕнтĕ государствăна тырă парса татмалли татăклă тапхăр çитрĕ. Шăпах çак кунсемпе эрнесенче ĕнтĕ парти, совет тата хатĕрлев организацийĕсен государствăна тырă парас тĕлĕшпе пуринчен ытларах оперативлă ĕçлемелле; обязательствăра кăтартнă срокченче кашни районпа кашни колхоз тăрăх государствăна тырă парса татмалла.

Малта пыракан районсемпе колхозсем планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă пама тытăнчĕç.

Çак патриотла пуçару пирĕн Тăван çĕршыва апат-çимĕç парса тăрас ĕçре калама çук паха вырăн йышăнса тăрать. Ăна пур çĕрте те анлăн сарса ямалла.

Орденлă Чăваш республики мĕнпур çĕршыв умĕнче ноябрĕн 1-мĕшĕччен государствăна тырă парса татма сăмах пачĕ. Пирĕн çак социализмлă обязательствăна пĕр сăмахсăрах пурнăçламалла.

Орденлă Чăваш республикинчи ĕççыннисем, вăрçăн йывăр çулĕсенче Тăван çĕршывăн пур заданийĕсене, те ăнăçлăн пурнăçласа пынăскерсем, халĕ те хăйсен патриотла тивĕçне чыслăн тултарассине çирĕп шанса тăрар.

Октябрь уйӑхӗ—государствӑна тырӑ, ҫӗрулми, пахчаҫимӗҫ парса татмалли тата авӑн ҫапса пӗтермелли уйӑх

РЕСПУБЛИКӐРА ГОСУДАРСТВӐНА ТЫРӐ ПАРАС ӖҪ ОКТЯБРӖН 10-мӗшӗ ТӖЛНЕ МӖНЛЕ ПЫНИНЕ КӐТАРТАКАН

СВОДКА

(Процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырӑ панӑ
1. Вӑрнар	102,3
2. Муркаш	87,3
3. Советски	86,0
4. Етӗрне	84,6
5. Шупашкар	83,6
6. Сӗнтӗр	83,0
7. Красноармейски	82,8
8. Чурачӑк	81,8
9. Сӗнтӗрвӑрри	80,0
10. Ҫӗрпӳ	79,7
11. Шӑхасан	78,4
12. Вӑрмар	78,1
13. Элӗк	77,9
14. Пӑрачкав	76,0
15. Калинино	76,0
16. Куславкка	71,8
17. Йӗпреҫ	71,8
18. Елчӗк	71,3
19. Октябрьски	71,2
20. Ишлей	69,7
21. Первомайски	67,1
22. Канаш	66,2
23. Чкаловски	65,8
24. Комсомольски	64,8
25. Улатӑр	61,5
26. Хӗрлӗ Чутай	58,3
27. Ҫӗмӗрле	58,2
28. Тӑвай	57,8
29. Шӑмӑршӑ	56,6
30. Кувакино	42,4

МАЛТИ ВЫРӐНА ТУХАССИШӖН

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Районри колхозсем капан хывса, авӑн ҫапса пӗтерес тата государствӑна тырӑ парса татас тесе тимлӗн ӗҫлеҫҫӗ. Паянхи куна 49 колхоз кӗлтене капана хывса пӗтернӗ. Вӗсен шутне «Янмурзино», Ильич ячӗпе тӑракан, «Жнейка», «Комбайн», «Пятилетка» т. ыт. колхозсем кӗреҫҫӗ. 14 колхоз авӑн ҫапса пӗтернӗ. Ҫак колхозсем государствӑна тырӑ, ҫӗрулми тата пахчаҫимӗҫ те парса татнӑ.

«Янмурзино» колхоз (председателӗ Н. Тимофеев юлташ) районра чӑн малтан государствӑна тырӑ памалли плана тултарчӗ. Вӑл МТС машинисемпе ӗҫленӗшӗн натуроплата тата арман авӑртнӑшӗн кӗреҫе сӑнӑхӗ те парса татрӗ. Колхоз кӑҫал пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илнӗ. Уйрӑмӑнах А. Петров юлташ ертсе пыракан бригадӑн тырӑ тухӑҫлӑхӗ пысӑк. Ҫак бригада кашни гектартан вӑтам шутпа 16 центнер тулӑ пухса илнӗ. Уйрӑм участоксенче урпа гектартан 33 центнера ҫити тухать.

Районри 51 колхоз ҫӗрулми кӑларса пӗтернӗ. «Чамыш», «Чувашия», «Свобода», «Победа», Калинин, Чкалов ячӗсемпе тӑракан тата ытти колхозсем государствӑна ҫӗрулмипе пахчаҫимӗҫ парса татнӑ. «Красный герой» колхозӑн кӑҫал ҫӗрулми ӑнса пулнӑ. Колхоз государствӑна ҫӗрулми парса татнӑ, вӑрлӑхлӑх тата выльӑхсем валли те ҫителӗклӗ уйӑрнӑ. Вӑл колхозниксене ӗҫкунӗ тӑрӑх 3-шер килограмм ҫӗрулми валеҫсе парать.

Районри колхозсем вӑрлӑхлӑх курӑксене пухса кӗртес тӗлӗшпе те тимлӗн ӗҫлеҫҫӗ. Пур колхозсем те вӑрлӑхлӑх курӑксене вырса итеме кӗртнӗ. Байсубинӑри Молотов ячӗпе тӑракан колхоз 5,5 гектар вӑрлӑхлӑх курӑка вырса ҫапнӑ тата шӗкӗлчесе хунӑ.

А. НИКОЛАЕВ.

Тырӑ памалли график—закон

ҪӖМӖРЛЕ. Район государствӑна тырӑ парас енӗпе чӑтма ҫук юлса пырать. Ворошилов ячӗпе тӑракан тата «Комбайн» колхозсем хӑйсен обязательствисене вӗр уйӑх каялла тултарнӑ. Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз районра чӑн малтан авӑн ҫапса пӗтерчӗ, государствӑна ҫӗрулмипе пахчаҫимӗҫ тата выльӑх-чӗрлӗх продукцийӗ те пӗтӗмпех парса татнӑ. Ленин ячӗпе тӑракан тата «Волга» колхозсем те государствӑна тырӑ памалли хӑйсен обязательствисене тултарчӗҫ. «Молодая сила», «1-ое Мая», «Ударник» колхозсем хӑйсен планӗсене тултарса пыраҫҫӗ.

Юлса пыракан колхозсен шутне «Искра» (председателӗ Кузьмин юлташ), «Красноармеец» (председателӗ Сычев юлташ), «Ударник» (председателӗ Арюхин юлташ), Буденный ячӗпе тӑракан колхозсем кӗреҫҫӗ. Вӗсем района намӑслӑн каялла туртса тӑраҫҫӗ.

Хӑшпӗр колхозсенче сиенлӗ шухӑшсемпе ӗҫлекенсем те пур. «Заря», «Авангард», «Путь Ленина», «Красная звезда» колхозсем хатӗрлев пунктне тырӑ леҫме тӑхтаса тӑнӑ. Авӑн ҫапнӑ ҫӗрте икӗ молотилка ӗҫлеҫҫӗ пулин те, «Искра» колхоз председателӗ Кузьмин, ҫапнӑ тырӑ ҫук тесе, государствӑна тырӑ леҫмесӗр тӑнӑ.

Государствӑна тырӑ памалли график закон пулса тӑрать. Ӑна никам та пӑсма пултараймасть. Ҫав вӑхӑтрах государствӑна тырӑ леҫмесӗр тӑракансем ҫине килӗшӳллӗн пӑхса ларни кунта усҫӑнах палӑрать.

Район государствӑна тырӑ парас ӗҫре юлса пынине пӗтерме вӑхӑт ҫитнӗ.

Республикӑри МТС-сенче

Кӗрхи ҫӗртме планне тултарнӑ

КУСЛАВККА, октябрӗн 11-мӗшӗ. (Телефонпа). Кӗрхи ҫӗртме тумалли плана октябрӗн 10-мӗшӗ тӗлнӗ 102 процент тултартӑмӑр. Ҫӗртме тӑвас тӗлӗшпе уйрӑмӑнах В. Казаков юлташ ертсе пыракан 10-мӗш трактор бригади кӑтартуллӑ ӗҫлерӗ, вӑл 260 гектар сухаларӗ. Иккӗмӗш вырӑна 4-мӗш трактор бригади тухрӗ. Ҫак бригадӑра Антонов юлташ бригадир пулса ӗҫлет. Бригада 310 гектар сухаланӑ. Скворцов юлташ бригади 286 гектар, Желтухин юлташ бригади 189 гектар сухаласа, хӑйсен планӗсене 120—130 процент тултарчӗҫ.

МТС-ри Полутин, Ларюхин, Белков, Андреев, Егоров трактористсем кӗрхи ҫӗртмере ӑнӑҫлӑ ӗҫлерӗҫ. Вӗсем кашниех 65—80 гектар сухаланӑ. Уйрӑмӑнах Ивановпа Иванова трактористсен ӗҫне палӑртмалла. Пиччӗшпе йӑмӑкӗ пӗр тракторпа ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем ҫӗртме тумалли хӑйсен планне 115 процент тултарчӗҫ.

Пирӗн МТС тракторсемпе ӗҫлемелли ҫулталӑкри плана 140,6 процент тултарчӗ, горючи 15.047 килограмм перекетлерӗ.

Ӗнер МТС-ри пуҫламӗш парторганизацин пухӑвӗ пулса иртрӗ. Ҫак пухура ВКП(б) Обкомӗн XXIII-мӗш пленумӗн решенийӗсене сӳтсе-яврӑмӑр. Трактористсемпе трактористкӑсем планран иртерсе 1000 гектар ҫӗртме сухи сухалама пулчӗҫ.

А. ЛАВРЕНТЬЕВ, МТС директорӗ.

Малта пыракан трактористсем

ШӐМӐРШӐ. МТС-ри 3-мӗш трактор бригади (бригадирӗ С. Долгов юлташ) кӗрхи ҫӗртме тумалли плана октябрӗн 9-мӗшӗ тӗлне 101 процент тултарнӑ. Ҫак бригадӑри М. Захуков тракторист 100 гектар вырӑнне 115 гектар сухаланӑ. Трактористка Клавдия Юманова юлташпа тракторист Федор Юманов юлташ газогенераторлӑ тракторпа хӑйсен планне кашниех 110-шар процент тултарнӑ.

Выльӑхсене—ӑшӑ витесем

КАЛИНИНО. Район 1945 ҫулта выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана пур выльӑх енӗпе те иртерсе тултарчӗ.

Халӗ район умӗнче тӑракан задача вӑл — ҫав выльӑхсене тӗрӗс-тӗкӗл хӗл каҫарасси пулса тӑрать. Ҫак задачӑна ӑнӑҫлӑн пурнӑҫлас тесен, колхозсенче ҫителӗклӗ таран выльӑх апачӗ пулмалла тата хӗл валли ӑшӑ витесем хатӗрлемелле.

Калас пулать, районри колхозсенче пур йышши выльӑхсем валли те витесемпе ытти ҫурт-йӗрсем ҫителӗклӗх.

Выльӑхсене шанчӑклӑ, ӑшӑ хӗл каҫармалла тӑвас тесе, колхозсенче пӗтӗмпе 60 ремонтӑй бригада ӗҫлет. Ку тӗлӗшпе выльӑх-чӗрлӗх работникӗсем хӑйсем те сахал мар ӗҫсем тӑваҫҫӗ.

Услапари «Броневик» колхозра (председателӗ коммунист М. Смирнов) выльӑх-чӗрлӗх ҫурчӗсене хӗле хатӗрлес тӗлӗшпе сулах ӗҫлеме тытӑннӑ. Ку ӗҫе фермӑсен заведующийӗ С. Михайлов хӑй тата старши конюх В. Волков ертсе пынӑ, выльӑх-чӗрлӗх работникӗсем юсав ӗҫне пурте хутшӑнса ӗҫленӗ. Платник ӗҫсене тума ҫеҫ ятарласа икӗ платник уйӑрса панӑ. Ҫапла мӗнпур выльӑх-чӗрлӗх ҫурчӗсене: 200 лаша вырнаҫмалӑх, 90 ӗне вырнаҫмалӑх, 100 сысна вырнаҫмалӑх, 200 сурӑх вырнаҫмалӑх, 25 пӑру вырнаҫмалӑх, 40 путек вырнаҫмалӑх витесене пӗтӗмпех юсаса хӗле хатӗрлесе ҫитернӗ. Вӑл ҫуртсенчи шӑтӑк-ҫурӑксене йӑлтах мӑкласа питӗрнӗ. Ҫивиттисене юсанӑ, ҫуса тасатса дезинфекци тунӑ, шалтан пурӑпа шуратнӑ. Выльӑхсем валли 259 тонна утӑ, 200 тонна ыраш улӑмӗ, 180 тонна ҫуртыр улӑмӗ уйӑрнӑ. Авӑн ҫапса пӗтернӗ хыҫҫӑн выльӑх апачӗ ытлашшипех уйӑраҫҫӗ, ӑна вара фермӑсен заведующийӗпе старши конюха акт ҫырса параҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне, 120 тонна силос хывнӑ, вӗлтрен пӗр тонна, армути 0,5 тонна, ҫулҫӑллӑ апат 50 лав хатӗрлесе хунӑ.

Ҫавалкассинчи «Сутталла» колхозра (председателӗ Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗ орденоносец А. Емельянов) тата Кушар Юнтапари Каганович ячӗпе тӑракан колхозра (председателӗ Булагин юлташ) выльӑх-чӗрлӗх витисене юсаса хатӗрленӗ. «Первое мая», «Социализм», Чапаев ячӗпе тӑракан колхозсем те вӗсенчен юлмаҫҫӗ. Вӗсенче выльӑхсене хӗл каҫарма выльӑх апачӗ те ҫителӗклӗ хатӗрленӗ. Пушкин ячӗпе тӑракан колхозра 20 пӑру вырнаҫмалӑх ҫӗнӗ вите туса лартрӗҫ.

Районри колхозсенче хӗле хатӗррине тӗрӗслесе йышӑнакан 9 комисси ӗҫлет. Малта пыракан колхозсенче ӗҫе тӗрӗслесе йышӑннӑ та ӗнтӗ.

Кунпа пӗрлех ҫитменлӗхсем те пур-ха. Выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарма хатӗрленес тӗлӗшпе Тушкассинчи «Труд» колхозра ку таранччен нимӗн те туман. Кунта витесем япӑхса кайнӑ, вӗсен ҫивиттисем шӑтӑк тата йӑтӑнса анса пӗтнӗ, кантӑкӗсем ҫук, таса мар. Тислӗке тахҫантанпах кӑларман. Колхоз председателӗ Михайлов ӗҫе юсама тӑрӑшмасть, вӑл ытларах ӗҫкӗре ҫӳрет. Ягунькӑри «Броневик» тата Ассакассинчи «КИМ» колхозсенче те хӗле ҫителӗксӗр хатӗрленеҫҫӗ-ха.

Районӗпе илсен, выльӑх витисене 70—80 процентран ытла мар хӗле хатӗрлесе ҫитернӗ. Выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарма хатӗрленсе ҫитнине тӗрӗслекен комиссисем ҫитменлӗхсене кӑтартса вӗсене пӗтерме срок парса хӑвараҫҫӗ.

Е. ВОЛКОВ. (Хамӑр корр.).

АННА КАРТАВАЯ ЗВЕНИН ҪӖНӖ РЕКОРЧӖ

КЕМЕРОВО, октябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Кӑҫал ҫуркунне Кузбасри паллӑ колхозницӑ, СССР Верховный Совечӗн депутачӗ Анна Ефимовна Картавая Мускав облаҫӗнчи ҫӗрулми тӑвас тӗлӗшпе чапа тухнӑ Тамара Крутовӑпа тата Капитолина Шоринӑпа социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн договорне тунӑ. 10 гектар ҫӗр ҫинчен Картавая кашни гектартан вӑтамран 350-шар центнер ҫӗрулми туса илме сӑмах панӑ.

Анна Картавая хӑйӗн сӑмахне чыслӑн тӳрре кӑларчӗ. Кӑҫал ҫанталӑк юрӑхлах пулман пулин те, вӑл вайлӑ ҫӗрулми туса илме пултарчӗ. Ӗнер унӑн звени ҫӗрулми кӑларса пӗтерчӗ. «Лорх» сортлӑ ҫӗрулми лартнӑ пӗр гектар пысӑкӑш участок ҫинчен вӑл 1.139,5 центнер ҫӗрулми туса илнӗ, 0,46 гектар пысӑкӑш участок ҫинчен «берлихингер» сортлӑ 540 центнер ҫӗрулми пухса кӗртнӗ. Вӑтамран илсен, вӑл ҫӗрулми лартнӑ мӗнпур ҫӗр лаптӑкӗнчен кашни гектартан 350-шар центнер ҫӗрулми пухса илнӗ.

А. Е. Картавая звени хушса тӳлемелли йӗрке тӑрӑх 3.000 пӑт ытла ҫӗрулми илнӗ.

Н. И. Ашмарин ҫуралнӑранпа 75 ҫул тултарнӑ май туса ирттернӗ лару

Октябрӗн 9-мӗшӗнче Шупашкарта Чӑвашсен чӗлхепе литература тата истори тӗлӗшпе ӗҫлекен наукӑпа тӗпчев институчӗн Ученӑй совечӗ Н. И. Ашмарин ҫуралнӑранпа 75 ҫул тултарнӑ май лару туса ирттерчӗ.

Институт директорӗ П. Г. Григорьев юлташ хӑйӗн умсӑмахӗнче Н. И. Ашмарин пысӑк ученӑй тюрколог пулни ҫинчен, вӑл чӑваш чӗлхи тӗлӗшпе чаплӑ кӗнекесем нумай пичетлесе кӑларни ҫинчен тата чӑваш чӗлхин нумай томлӑ словарьне ҫырса хатӗрлени ҫинчен каларӗ, правительствӑпа большевиксен партийӗ наукӑсене аталантарма ҫав тери тӑрӑшнине кӑтартса пачӗ, юлашкинчен чӑваш чӗлхине тӗпчес ӗҫри задачӑсем ҫинчен, ҫитес ҫулсенче ҫав тӗлӗшпе мӗнле кӗнекесем пичетлесе кӑлармалли ҫинчен каласа пачӗ.

Ученӑй совет ларӑвӗнче ҫак докладсене итлерӗҫ: 1) «Н. И. Ашмарин—чӑваш чӗлхине тӗпченӗ ученӑй», докладчик—филологи наукисен кандидачӗ, институтӑн старши научнӑй сотрудникӗ В. Г. Егоров, 2) «Н. И. Ашмарин—чӑваш чӗлхи словарьне ҫырса хатӗрленӗ ҫын», докладчик—инситутӑн научнӑй сотрудникӗ А. И. Иванов. Ларура пулнӑ ҫынсем—писательсем, наука работникӗсем, артистсем, студентсем—докладсене тимлӗн итлерӗҫ.

Докладсем хыҫҫӑн Н. И. Ашмарин патӗнче вӗренсе ӗҫленӗ Н. А. Резюков юлташ (Чӑвашсен педагогика институчӗн старши преподавателӗ) Н. И. Ашмаринӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗсем ҫинчен аса илсе каласа пачӗ.

Наукӑпа тӗпчев институчӗ Н. И. Ашмарин ҫырнӑ кӗнекесен выставкине организациленӗ.

ХУЛАРИ ҪАМРӐКСЕНЕ РЕМЕСЛА УЧИЛИЩИСЕМПЕ ФЗО ШКУЛӖСЕНЕ ИЛЕССИ

Октябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне хулари ҫамрӑксене ремеслапа чугун ҫул училищисене тата ФЗО шкулӗсене пӗтӗмпех илсе пӗтермелле. Халӗ ҫав шкулсене 98.000 ача ытла илнӗ, вӑл шутран 68.000 ача ытла хӑйсен ирӗкӗпе пырса кӗнӗ. Планпа палӑртнӑ тӑрӑх, хулари ҫамрӑксене 160.000 ҫын илмелле.

СССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи ӗҫ резервисен Главнӑй Управленийӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, нумай облаҫсенче (Ленинград, Воронеж, Иваново, Курск тата ытти облаҫсенче те) хулари ҫамрӑксене ремеслапа чугун ҫул училищисене тата ФЗО шкулӗсене планпа палӑртнӑ чухлех илсе ҫитернӗ.

Октябрӗн 15-мӗшпе ноябрӗн 15-мӗшӗ хушшинче ремесла училищисемпе ФЗО шкулӗсене ялти ҫамрӑксене илмелле. (ТАСС).

Пӗтӗм тӗнчери профсоюзсен конференцийӗ хупӑнни

ПАРИЖ, октябрӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Октябрӗн 9-мӗшӗнче пӗтӗм тӗнчери профсоюзсен конференцийӗнче Голланди, Египет, Иран тата Афганистан делегачӗсем сӑмах тухса каланӑ. Унтан сӑмах совет профсоюзӗсен делегатне Тарасов юлташа панӑ. Вӑл хӑйӗн сӑмахӗнче конференци пысӑк ҫитӗнӳсем тунине палӑртнӑ. Унтан Тарасов юлташ конференци ӗҫне пӗтерме сӗнӳ панӑ. Конференци ҫав сӗнӳпе килӗшнӗ. Конференцие хупса Леон Жуо юлашки сӑмах каланӑ. Вӑл хӑйӗн сӑмахӗнче конференци ӗҫӗсем ӑнӑҫлӑ пулнине палӑртнӑ.

ФРАНЦИПЕ СОВЕТ ПРОФСОЮЗӖСЕН КОМИТЕЧӖН ЛАРӐВӖ

ПАРИЖ, октябрӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, октябрӗн 9-мӗшӗнче ирхине Парижра пӗтӗмӗшле ӗҫ конфедерацийӗн ҫуртӗнче Францпе Совет профсоюзӗсен комитечӗн ларӑвӗ пулса иртнӗ. Совет делегацине Кузнецов, Франци делегацине—Фрашон ертсе пынӑ.

ОБЩИНӐСЕН ПАЛАТИНЧЕ БЕВИН ТУХСА КАЛАНИ

ЛОНДОН, октябрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС) Эрнст Бевин ӗнер общинӑсен палатинче Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗсен совечӗн сессийӗ ҫинчен каласа панӑ. Малтан вӑл сессин мӗнле-мӗнле ыйтусене тата мӗнле йӗркепе сӳтсе-явмалла пулни ҫинчен каланӑ, ҫав йӗркене эпӗ хам сӗнтӗм, тенӗ.

Унтан Бевин ҫапла каланӑ: конференципе Финляндипе тумалли мирлӗ договорӑн проекчӗ пирки практикӑллӑ килӗшӳ тунӑччӗ тата Италипе тумалли мирлӗ договорӑн проектне ҫырса хатӗрлес ӗҫре чылай пысӑк ҫитӗнӳ тунӑччӗ, тенӗ.

Сессире министрсем тӗрлӗ шухӑшлани ҫине Англи делегацийӗ мӗнле пӑхни ҫинчен каласа парсан, Бевин малалла ҫапла каланӑ: ют ҫӗршыв ӗҫӗсен висӗ министрӗ пӗр-пӗринпе калаҫса татӑлаймарӗҫ. Вӗсем вара ҫав калаҫса татӑлайман ыйтӑва пӑхса тухма хӑйсен правительствисен пуҫлӑхӗсене пачӗҫ, анчах та ҫаксем ҫав позицисенех йышӑнчӗҫ.

Унтан Бевин ҫакӑн пек шухӑш каланӑ: халех калаҫса татӑлмашкӑн эпир Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗсен совечӗн сессине икӗ аслӑ ҫӗнтерӳ хыҫҫӑн ытла ир пухрӑмӑр пулмалла, тенӗ. Анчах вӑл малалла ҫапла шанса каланӑ: вӑхӑтпа чӑтӑмлӑх пулсан тата йывӑрлӑхсене ӑнланса илсен, хальхи хирӗҫӳсене те, малашне сиксе тухма пултараканнисене те сирсе ярӑпӑр, тенӗ.

Бевин каласа пӗтерсен, Черчилль сӑмах тухса каланӑ. Вӑл Бевина ҫапла каласа пӗлтернӗшӗн оппозици ячӗпе тав тунӑ.

АНГЛИРИ ХАҪАТСЕМ БЕВИН ТУХСА КАЛАНИ ҪИНЧЕН МӖН ҪЫРАҪҪӖ

ЛОНДОН, октябрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). «Дейли мейл» хаҫат редакци ҫырнӑ статьяра ҫапла калать: Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗсен совечӗн сессийӗ пӗтсе ларни ҫинчен Бевин чӑнах та хӑй каласа панинчен ытларах калама пултарайман пуль, «анчах, апла пулсан та, вӑл калани хуйхӑртрӗ..., вӑл малашнехи ӗҫсем пирки мӗнле те пулин сӗнӳ парӗ тесе шанса тӑнӑччӗ эпир. Анчах Бевин апла тумарӗ. Вӑл Вашингтонри ҫынсем калаиинех тепӗр хут каласа пачӗ. Вӑл калани хӑшпӗр енчен Мускав калаиине хирӗҫ пырать. Ыйтусене сӳтсе-явас йӗрке пирки тавлашни принцип енчен паха ыйтусемпе ҫыхӑнма пултарать, — тенӗ Бевин. Англи халӑхӗ вӑл ыйту тӗлӗшпе пирӗн правительство мӗн тума шутлани ҫинчен тата мирлӗ калаҫусене тепӗр хут пуҫласа яма май пултӑр тесе мӗн тума шутлани ҫинчен пӗлесшӗн. Ҫав паха ыйтусем ҫинчен пирӗн халах халь те нимӗн те пӗлмест-ха. Бевин ҫапла шутлать: халех килӗшсе татӑлмашкӑн эпир тин ҫеҫ ҫӗнтертӗмӗр ҫав, тет. Анчах та ҫакна ӑнланма йывӑр: вӑрҫӑра ҫӗнтерме пулӑшнӑ пӗрлӗхрен аяккарах тӑрсан, килӗшӳ тума мӗншӗн ҫӑмӑлтарах пулӗ-ши вара?»

«Ньюс кроникл» хаҫат редакци ҫырнӑ статьяра ҫапла калать: Молотовпа Бевин пӗр-пӗринчен уйӑрӑлнӑ чух пӗр-пӗрне янӑ ҫырусем «килӗшӳ тӑвас кили пӗтсе ларманнине кӑтартаҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл тепӗр утӑм тума лайӑх май пулса тӑрать».

АНГЛИ ЮТ ҪӖРШЫВСЕНЧЕН ТАВАР САХАЛТАРАХ ИЛМЕ ПУҪЛАТЬ

ЛОНДОН, октябрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). «Дейли экспресс» хаҫатӑн политикӑллӑ ӗҫсем ҫинчен ҫыракан сотрудникӗ ҫапла пӗлтерет: Британи правительстви Британи империне кӗрекен ҫӗршывсен правительствисене доллар тӳлесе илмелли таварсене питӗ сахал илме хушнӑ. Британи правительстви Англи США-па ҫӗнӗ килӗшӳ тӑвиччен доллар тӳлесе илмелли таварсене питӗ кирлисене ҫеҫ илсе тӑма шутланӑ пирки ҫапла тума хушнӑ. Родезирен ҫапла пӗлтереҫҫӗ: Британи правительстви Родези правительствине Вашингтонри калаҫусен результачӗсем паллӑ пулса тӑриччен горючи парас нормӑна ӳстермелле мар, тесе каланӑ.

АНГЛИРИ ДОКСЕНЧИ РАБОЧИСЕН ЗАБАСТОВКИ

ЛОНДОН, октябрӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Мерсейсайдри 14.000 докер халӗ те забастовка тӑваҫҫӗ. Октябрӗн 8-мӗшӗнче вӗсем ӗҫе тухаҫҫӗ тесе шутланӑ, анчах та вӗсем ӗҫе тухман. Мерсейсайдра чарӑнса тӑнӑ судносен хисепӗ хальхи вӑхӑтра 200 ҫитнӗ.

ЛОНДОН, октябрӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Гульри доксенче ӗҫлекен 4.000 рабочи забастовка тунине пула, 30 судно ытла чарӑнса тӑнӑ.

АНГЛИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙӖ КАЛАНИ

ЛОНДОН, октябрӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Индин пуласлӑхӗ пирки октябрӗн 8-мӗшӗнче пичетлесе кӑларнӑ заявленире Англири коммунистсен партийӗ ҫапла тума хушать: правительствӑн пӗтӗм Инди валли суйлав списокӗсем хатӗрлесе хумалла, ҫитӗннӗ ҫынсене пурне те суйлав прави памалла, политика пирки тытса хупнӑ ҫынсене пурне те ирӗке кӑлармалла, вырӑнтан вырӑна куҫас тӗлӗшпе тата сӑмахпа пухусем тӗлӗшпе тунӑ хӗсӗк условисене пурне те пӗтерсе лартмалла; суйлава мӗнле хатӗрленнине сӑнаса тӑма тата, ҫӗршыври выҫлӑха шута илсе, апат-ҫимӗҫпе хаксене тӗрӗслесе тӑма провинцисенче тӗрлӗ представительсенчен вӑхӑтлӑх правительствӑсем туса хумалла; конгреспа мусульмансен лигине пӗр тан шутласа тата вакрах организацисен представителӗсене кӗртсе, ответлӑ вӑхӑтлӑх правительство туса хумалла; ҫав правительство ирӗк памасӑр Индие экономикӑпа налогсем тӗлӗшпе нимӗнле решенисем те йышӑнтармалла мар.

Заявленире тата тред-юнионсен конгресне хӑйӗн Индие делегаци яма йышӑннӑ решенине пурнӑҫа кӗртме сӗннӗ.

ЮТ ҪӖРШЫВ ҪАРӖСЕНЕ ТЕГЕРАНРАН ИЛСЕ ТУХНИ

ТЕГЕРАН, октябрӗн 5-мӗшӗ. (ТАСС). Америка ҫарӗн ытларахӑш пайне Тегеранран илсе тухнӑ. Хальхи вӑхӑтра американецсен темиҫе ҫӗр салтакӗпе офицерӗ ҫеҫ Амирабадра (Тегеран тулашӗнче) пурӑнаҫҫӗ. Англи ҫарӗсем вара халӗ те ҫав-ҫавах Тегеранра тӑраҫҫӗ-ха. Ҫакна май кунта ҫапла ҫыраҫҫӗ: Берлинри конференцире висӗ правительствӑн пуҫлӑхӗ союзниксен ҫарӗсене Тегеранран илсе тухасси ҫинчен шӑпах ӗнтӗ Англи пуҫарӑвӗ тӑрӑх йышӑннӑ. Совет ҫарӗсене Тегеранран 1945 ҫулхи сентябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпех илсе тухнӑ.

ГРЕЦИРИ ВУЛГАРИС ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРӐНТАН ТУХНИ

ЛОНДОН, октябрӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви Афины хулинчен пӗлтернӗ тӑрӑх, унта официальнӑй йӗркепе ҫапла пӗлтернӗ: Вулгарис адмирал правительстви вырӑнтан тухнӑ.

АФИНЫ, октябрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Вулгарис правительстви вырӑнтан тухни ҫинчен пичет вице-министрӗ ҫапла каланӑ: союзниксен посолӗсем питӗ хистенӗ пирки тата правительство хӑй те январь уйӑхӗнче суйлав туса ирттерме пур условисем те пур тесе шутланӑ хыҫҫӑн, вӑл суйлава ҫав вӑхӑтра ирттересси ҫинчен пурне те пӗлтернӗччӗ. Анчах та ун хыҫҫӑн Грецири чи пысӑк партисенчен пӗрин пуҫлӑхӗ ҫав парти суйлава хутшӑнманни ҫинчен пӗлтерчӗ. Премьер-министр вара правительствӑна законлӑ тесе шутламан ҫынсемпе суйлав ыйтӑвӗсем ҫинчен, сӑмахран, суйлав йӗрки ҫинчен, урӑх калаҫма пултараймарӗ, тенӗ.

Вице-министр тата ҫапла каланӑ: Вулгарис регента ҫӗнӗ правительство туса тума пӗр либералсене ҫеҫ хушас марччӗ, тенӗ, «мӗншӗн тесен апла тепӗр енӗ—«монархистсем»—алла усса ларӗҫ», тенӗ. Вулгарис ҫӗнӗ правительство туса хурас ӗҫе—либералсемпе монархистсен партийӗсене иккӗшне те хушма сӗннӗ.

ГРЕЦИРИ ЛИБЕРАЛСЕН ПАРТИЙӖПЕ МОНАРХИСТСЕН ПАРТИЙӖ ПРАВИТЕЛЬСТВО ТУМА КИЛӖШМЕН

ЛОНДОН, октябрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви Греции телеграф агентстви пӗлтернине парать. Пӗлтерӳре ҫапла каланӑ: Грецире чи пысӑк икӗ парти —республикӑшӑн тӑракан либералсен партийӗпе монархистсен партийӗ—Дамаскинос регент сӗннине йышӑнман. Дамаскинос ҫав партисене Вулгарис адмиралӑн вырӑнтан тухнӑ правительстви вырӑнне пӗрлешӳллӗ политика правительстви тума сӗннӗ пулнӑ.

ШУБАШИЧ ВЫРӐНТАН ТУХНӐ

БЕЛГРАД, октябрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Октябрӗн 10-мӗшӗнче каҫхине официальнӑй йӗркепе ҫапла пӗлтернӗ: Югославин ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Шубашич тата портфельсӗр министр Шутей вырӑнтан тухнӑ.

ТОДЗИОНА ТӖРМЕНЕ ХУПСА ЛАРТНӐ

ТОКИО, октябрӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин Токиори корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Японин премьер-министрӗ пулнӑ Тодзиона Омори тӗрмине хупса лартнӑ. Маларах вӑл хӑйне хӑй вӗлерме хӑтланса пӑхнӑ пулнӑ.

ТРУМЭН ТИПТОНВИЛЛЬРИ ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИРЕ ТУХСА КАЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, октябрӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчӗ Теннесси штатӗнчи Типтонвилльрен пӗлтернӗ тӑрӑх, Трумэн президент ятарласа пухнӑ пресс-конференцире ҫапла каланӑ: Пӗрлешӳллӗ Штатсем атом бомбин секретне нимӗнле ҫӗршыва та пӗлтерме шутламаҫҫӗ, тенӗ.

Трумэн тата ҫапла каланӑ: Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗсен Лондонри конференцийӗ пӗтӗмпех пӗтсе ларчӗ тесе шутламастӑп эпӗ, тенӗ. Пӗрлешӳллӗ Штатсен интересӗсене хирӗҫ пыман, анчах пирӗн чӗлхесем тӗрлӗ пулнӑ пирки тата тӗрлӗ кӑсарма тивнӗ пирки хӑшпӗр чухне йывӑрлӑхсем сиксе тухнӑ, тенӗ.

АМЕРИКӐРИ ПРОФСОЮЗСЕН ХАҪАЧӖСЕМ ГЕРМАНИ ПРЕДПРИЯТИЙӖСЕН АКЦИЙӖСЕНЕ СУТӐН ИЛНИ ҪИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, октябрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Хӑшпӗр профсоюз органӗсем Америкӑн Германири политикине критиклаҫҫӗ.

Чугун ҫул ҫинче ӗҫлекенсен «Лейбор» хаҫачӗ ҫапла пӗлтерет: хӑшпӗр американецсемпе акӑлчансем нимӗҫсен ҫар концернӗсен акцийӗсене сутӑн илеҫҫӗ, вӗсем США Германие контроллесе тӑма пӑрахнӑ хыҫҫӑн тата ҫав предприятисем ҫӗнӗрен ҫар хатӗрӗсем тума пуҫланӑ хыҫҫӑн усӑ илсе тӑма шутлаҫҫӗ. Кунта килнӗ хыпарсем тӑрӑх, спекулянтсем ҫав акцисене США-на, Англие, Испание, Португалие, Швецие, Швейцарие, Бразилие тата Кӑнтӑр Америкӑри ытти ҫӗршывсене тарса пынӑ нимӗҫсенчен илеҫҫӗ. Ҫав нимӗҫсенчен хӑшӗ-пӗри—Гитлер правительствине пулӑшса тӑнӑ промышленниксемпе банкирсем. Хаҫат ҫакна палӑртать: ҫав ҫынсен укҫа нумай, вӗсем нимӗҫ предприятийӗсене Америка тӗрӗслесе тӑрассине часрах пӗтерсе лартма тӑрӑшаҫҫӗ, ҫакӑн пирки тӗнчере ҫӗнӗ вӑрҫӑ сиксе тухас пулсан та вӗсем ҫавӑн пек тӑрӑшма пӑрахасшӑн мар.

ИСЛАНДИРИ ТИНӖСПЕ АВИАЦИ БАЗИСЕМ ҪИНЧЕН

СТОКГОЛЬМ, октябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Иртнӗ ҫу каҫиччен ют ҫӗршыври хаҫатсенче тата радио тӑрӑх Исланди вӑрҫӑна стратеги тӗлӗшӗнчен мӗн тери пысӑк вырӑн йышӑнса тӑни ҫинчен темиҫе хутчен те каласа панӑччӗ. Июнь уйӑхӗнче Рейтер агентстви Америкӑн Исландири ҫарӗсен командующийӗн заявленине пӗлтернӗччӗ. Унта ҫапла каланӑччӗ: Америка командованийӗ тепӗр 4—5 уйӑхран Исландири базӑсене пӑрахса тухса каять; анчах ун чухне Америка ҫарӗсем Исланди столици Рекьявик ҫывӑхӗнче пӗр авиобаза хӑварма шутлани ҫинчен пӗлтернӗччӗ. Ун хыҫҫӑн тепӗр икӗ уйӑхран Финляндири радио американецсем Исландири базӑсене пурне те хӑйсен аллинчех хӑварма шутлани ҫинчен пӗлтернӗччӗ. Финляндири радио ҫак хыпарсене Америкӑри хаҫатсенчен илсе пӗлтернӗччӗ.

Халӗ журналистсем хушшинче ҫакӑн пек сасӑ ҫӳрет: Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительстви Исланди правительствине Исландири тинӗс-ҫар тата авиаци базисене нумай вӑхӑтлӑха Америкӑна тара парасси ҫинчен договор тума сӗннӗ.

АМЕРИКӐРИ ПӖРЛЕШӲЛЛӖ ШТАТСЕНЧИ ЗАБАСТОВКӐСЕМ

САН-ФРАНЦИСКО, октябрӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Радио пӗлтернӗ тӑрӑх, октябрӗн 6-мӗшӗнче нефть промышленноҫӗнче ӗҫлекен рабочисен союзӗн руководителӗ союз отделенийӗсене пурне те телеграмма янӑ. Ҫав телеграммӑра вӑл рабочисене ӗҫе тухма хушнӑ. Вӑл ҫапла каланӑ: союз тинӗс министерствине пулӑшма сӑмах пачӗ, тенӗ. Нью-Йоркра забастовка тӑвакан грузчиксемпе портри рабочисем, 16.000 ҫын, ӗҫе тухма хатӗрленеҫҫӗ.

Анчах та, Ассошиэйтед пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, хӗвелтухӑҫ енчи ҫӗркӑмрӑк районӗсенче забастовкӑсем саралса пыраҫҫӗ, унта чылай промышленноҫсенче забастовка пуҫланса кайнӑ. Халӗ Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенче забастовка тӑвакансен хисепӗ 530.000 ҫынтан иртнӗ. Ҫӗркӑмрӑк кӑларакансем 6 штатра забастовка тунӑ пирки 450 шахтӑна хупса лартнӑ. Унта 147.000 ҫын забастовка тӑвать. Хӗвеланӑҫ енчи 7 штатра Лӑпкӑ океан патне каякан чугун ҫулсем ҫинчи 2.700 служащи забастовка тӑваҫҫӗ. Ҫакна пула 147.000 пассажир чугун ҫулсем ҫинче ларса юлнӑ.

НОРВЕГИ СТОРТИНГНЕ СУЙЛАНИН РЕЗУЛЬТАЧӖСЕМ

СТОКГОЛЬМ, октябрӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Стокгольмри радио пӗлтернӗ тӑрӑх, ӗнерхи суйлавсенче сулахай партисем ытларах сасӑ илнӗ. Норвегин ҫӗнӗ стортингне ҫапла вара сулахай партисенчен 81 депутат, сылтӑм партисенчен 69 депутат суйланӑ. Чи юлашки даннӑйсем тӑрӑх, тӗрлӗрен партисем суйлавра ҫакӑн чухлӗ мандатсем илнӗ (скобкӑра 1936 ҫулхи суйлавра ҫав партисем миҫе мандат илнине кӑтартнӑ): сылтӑмри парти—28 мандат (35), хресченсен партийӗ—12 мандат (18), христиансен халӑх партийӗ—9 мандат (2), «Венстре» партийӗ — 20 мандат (23), рабочисен партийӗ—73 мандат (70), коммунистсен партийӗ—8 мандат (0).

ЛАВАЛЕ ПЕРСЕ ПӐРАХМАЛЛА ТУНӐ

ПАРИЖ, октябрӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Франс пресс агентстви ҫапла пӗлтерет: суд Лавале персе пӑрахмалла тунӑ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн—0-67, заместителӗн — 2-89, секретариатӑн—4-26, пропаганда пайӗн—2-89, парти пурнӑҫ пайӗн—3-99, промышленность пайӗн—3-97, ялхуҫалӑх пайӗн—3-99, рабселькорсен пайӗн—0-67, издательство конторин — 0-23.

ЦТ 03550 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. 6. 59 42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.